(cc) BY



***Никитина Валентина Александровна***

учитель

***Иванова Крестина Владимировна***

учитель

МБОУ «Шаймурзинская ООШ им. Г. Айги»

д. Шаймурзино, Чувашская Республика

# ГЕННАДИЙ АЙГИ ПУЛТАРУЛĂХĔ КУЛЬТУРАСЕН ДИАЛОГĔ КОНТЕКСТĔНЧЕ

***Аннотаци:*** *статья Геннадий Айги (1934–2006) пурнăçĕпе пултарулăхне халаллать – чăваш поэзийĕн классики, унăн хайлавĕсене тĕнчери вун-вун чĕлхене куçарнă. Поэтăн нумай енлĕ ĕçĕ-хĕлĕ уçăлать: çĕнĕ поэзи шкулĕ («айгиевское направление») йĕркелени, франци, венгри, польша поэзийĕн антологийĕсене куçарни, «Чувашские поэты» пуххине темиçе европа чĕлхипе кăларни, тĕнче поэзине чăваш чĕлхине куçарни (50 яхăн чĕлхе). Пысăк наградăсене палăртаççĕ: Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ преми, К.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх премийĕ, П. Дефей ячĕллĕ Франци академийĕн премийĕ. Айга поэзи тĕнчин нумай виçелĕхне тишкереççĕ, поэтăн тăван ялĕнче (Шугырдан, Патăрьел районĕ) çуралнă куна халалласа «Айгиев вулавĕсене» ирттерес йăлана çырса кăтартнă. Статья поэтăн тăванĕсемпе юлташĕсен харпăр асаилĕвĕсем, шкул музейĕн материалĕсем тата вулакансен конкурсĕсем çинче никĕсленнĕ.*

***Тĕп сăмахсем:*** *Геннадий Айги, чăваш поэзийĕ, куçаруçă, антологи, тĕнчери палăрну.*

# ТВОРЧЕСКОЕ НАСЛЕДИЕ ГЕННАДИЯ АЙГИ В КОНТЕКСТЕ ДИАЛОГА КУЛЬТУР

***Аннотация:*** *статья посвящена жизни и творчеству Геннадия Айги (1934–2006) – классика чувашской поэзии, чьи произведения переведены на десятки языков мира. Раскрывается многогранная деятельность поэта: создание новой поэтической школы («айгиевское направление»), переводы антологий*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*французской, венгерской, польской поэзии, издание сборника «Чувашские поэты» на нескольких европейских языках, переводы мировой поэзии на чувашский язык (около 50 языков). Отмечаются высокие награды: премия имени Митты Васлейӗ, Чувашская государственная премия имени К. Иванова, премия Французской академии имени П. Дефея. Анализируется многомерность поэтического мира Айги, описывается традиция проведения «Айгиевских чтений» в родном селе поэта (Шыгырдан, Батыревский район), приуроченных ко дню рождения. Статья основана на личных воспоминаниях родных и соратников поэта, материалах школьного музея и конкурсов чтецов.*

***Ключевые слова:*** *Геннадий Айги, чувашская поэзия, переводчик, антология, мировое признание.*

Мухтанатпăр санпа, Айхи!

Пурăннă пулсан 2026-мӗш ҫулта сентябрӗн 12-мӗшӗнче Геннадий Айги 92 сул тултармаллаччӗ... Геннадий Айхи – чăваш поэзийӗн классикӗ. Вăл тӗлӗнмелле пысăк чунлă ҫын пулнă. Эпир кăна ним иккӗленмесӗр калама пултаратпăр. Чăвашсен хушшинче ҫавăн пек ăслă та пултаруллă ҫын пулнишӗн мухтанатпăр, мăнаҫланатпăр. Патăрьел районӗнчи Ҫӗньялăн вӗри чӗреллӗ ачи сăмах ҫӳпҫинче несӗлтен-несӗле упранакан пуянлăхпа уса курса тăван халăха тӗнче шайне ҫӗклерӗ. Ҫăмăл та ансат ҫулпа чуптарнипе мар, паян унăн сăввисене чăвашла та, вырăсла та, акăлчанла та, нимӗҫле те, французла та, яппунла тата ытти чӗлхесемпе те вулаҫҫӗ. Ҫивӗч те шăнăрлă сăвăсемшӗн, ют ҫӗршыв ҫыравҫисемпе ҫыхăну тытнăшăн самана саламачӗ самаях авнă, самаях суранлатнă ăна. Ахальтен мар ӗнтӗ вăл тӗнчене, ирӗке, ҫутталла тухса кайнă. Йывăр вăхăтра та пуҫа усмасăр, ҫанă тавăрса ӗҫленӗ. «Эпӗ халӗ – ҫын. Нихҫан, никам, Нимпе те вӗлереймен этем. Ялан, ялан пурăнакан этем. Пурăнмалли этем», – текен сăмахсем поэтăн ним сăлтавсăрах ҫырăнман пулӗ.

Вун тăххăрти сăвăҫ ҫапла ҫырнă: «Чăваш сасси пулман-ха манан сасă, тин ҫуралса пырать вăл: халь ăна хам ҫӗҫ илтетӗп-ха...» 50-мӗш ҫулсенче чăваш поэзийӗнче «айхилӗх» текен пулăм ҫуралать. Унăн витӗмӗ пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

сарӑлса пырать, хӑш-пӗр ҫамрӑк сӑвӑҫсене илӗртет, критиксене калаҫтарать. Иртнӗ ӗмӗрте Айхи ячӗ пӗтем Европа шайӗнче кӑна мар, Чӑвашра та пысӑк хисепе тивӗҫ пулать: Митта Ваҫлейӗн премине, К. Иванов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх премине илме тивӗҫлӗ пулнӑ.

Г. Айхи ячӗ уйрӑмах 1968-мӗш ҫулта, вӑл «Франци поэчӗсем» антологине куҫарса кӑларсан, вӑйлӑн янраса кайнӑ. Унӑн ҫак ӗҫне специалистсем пысӑк хак панӑ. Тӑлмачӑ Франци академийӗн П. Дефей ячӗллӗ премине илме тивӗҫлӗ пулнӑ. Поэзи анталогийӗ вал – Ҫӗршыв кун-ҫулӗ, ҫав ҫула кӑтартакан паллӑсем – аслӑ поэтсем, вӗсем Ҫӗршыв шӑпипе пӗр. Ҫавӑнпа антологие пичетленӗ чухне поэтсен биографийӗсене кӗске те пулин кӑтартасах пулать, вулакансем вӗсен пурнӑҫӗпе паллашнӑ май сӑввисене те тимлӗрех вулӗҫ», – тенӗ поэт. Тӑлмачӑ «Венгри позчӗсем» тата «Польша поэчӗсем» антологисем кӑларать. Тӗнче литературин классикӗсемпе ҫывӑххӑн паллашни тата вӗсен пултарулӑхне ҫине тӑрса тӗпчени, паллах, поэтӑн шырав ҫулне тата та ҫӳллӗ шайри ӑсталӑх патне туртнӑ. Европӑра Айхине уйрӑммӑн пӑхаҫҫӗ, тӗнчере ун пекки урӑх ҫук теҫҫӗ. Францин чи паллӑ сӑвӑҫисем те: «Паянхи вырӑс поэзийӗнче – пӗр иккӗленмесӗр – Айхи чи тӗлӗнмелле сасӑ пек янӑрать, пӗтӗм тӗнчипе вара чи пӗччен, пӗртен-пӗр сасӑ пек». Хисеплӗ вӗрентекенӗмӗр Геннадий Волков академик хӑйӗн шухӑшне ҫапла ҫаварса хунӑ: «Икӗ тӗрлӗ поэта пӗлетӗп: Айхи Геннадине чаваш поэтне... тата вырӑсла Айгине». Кунта виҫҫӗмӗш поэта та хушма пулать. Европӑри хальхи чи пысӑк поэтсен ретӗнче тивӗҫсемпе тӑракан AIGUI (ун ятне французла ҫапла сыраҫҫӗ А.Х.) пур. Тен, малтан поэтӑн ирӗкне тӗпе хуратпӑр пулсассӑн, унан пултарӑвӗн тупсӑмне нацилӗх паллипе кӑна палӑртаймастпӑр, пирӗн ӑна тытса чарма сӑлтав ҫук. Айхи – сӑмах ирӗкӗ, сӑвӑҫ ирӗкӗ, кӑмӑлӗ пур чух, сывлӑхӗ пур чухне ҫӳретпӗр тӗнче касса, хӑйӗн вулканӗсем чӗрисене ҫул хывтар. Пӗтӗм тӗнчипе пулччӑр вӗсем. Чи малтан чӑваша чыс та хисеп пулать. Пурпӗр унӑн чӑвашлӑх тымарӗ татӑлмасть, вырӑсла ҫырнӑ сӑввисенче те Айхин вӑрттӑн «чӑваш тӗнчи» пурӑнать, хай калашле:

«Ҫӗр тӑрӑх халӑхӑн.... / Тӗрӗкӗсем вырнаҫнӑ пек,

Вӗсен мӗлкисене куратӑп;/ Ҫав ҫӗрсенчи ҫут сывлаш та


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Таçти юратнă чун пек çывăх; / Вĕсен сăмахсăр кĕввинче –

Ача-пăча, атте-анне, / Ял-йыш, пускил... – юратнă халăх!» («Çерпӳел сăрчĕсем»)

Тасалăх, сутă(чун çути) Айхин чăвашла сăввисенче тĕп хăват пулса тăрать, пĕтĕм сăвă тытăмĕ, «сасăсем пĕрне-пĕри шырани», тĕссем пĕр-пĕринпе килĕштерни çак сутă çăлкуç таппипеле чĕрĕлет, çĕкленсе каять. Ун пек чухне сăвăç хăй те çанталăкăн уйрăлми пайĕ (пĕрчĕ) пулса юлать:...

Çакă çĕр çинче
Пулам эп – тĕс те сасă ваййинче
Хамра ялтракан, мĕнпур тĕнче
Сасне-чӳне хамра ялтракан
Тĕнчемĕр тĕлĕнтерĕвĕ кăна... («Улшану»)

Поэтăмăрăн пултарăвне хакланă май «чăвашлăх» е «вырăслăх» ыйтăвне ху-скатни усăсăр япала. Вĕсен хушшинче – пултару ĕçне илес пулсассан – чикĕ лартаймастăн. Айхи ĕçĕнче ытларах «европăлăх» сисĕнет, анчах çаксем пурте унăн поэзийĕн пĕлтерĕшне виçмелли виçесем мар (Чăвашлăх, тĕслĕхрен, ăна хăть мĕнле пытарсан та, хăй тĕллĕн тапса тухать). Г. Айхине «çутта кăларакан-сен» йышне кĕртеççĕ. Вăл, тĕнче культурине – литературине лайăх пĕлнĕрен, анлă тавракурăмлăскер пулнăран, чăваш чĕлхи, чăваш поэзийĕ мĕнешкел Кĕтрет иккенне пĕтĕм чун-чĕрипе туйса тăнăран, çав илеме тĕнчене кăтартасшăн пулнă. Айхи «Чаваш поэчĕсем» анталоги хатĕрленĕ. Кăткăс та йывăр пулнă çакă ĕç. Ют чĕлхене тăлмачсем валли чăвашла çавсене йĕркепĕрĕн вырăсла куçармалла. Ай-хи: «Йĕркепĕрлĕхсем тунă чухне сăвă вăйли – вăйсăрри тӳрех курăнать. «Вăйлă» сăва – яланах вăйла. Çеçпĕл кирек хăш чĕлхере те – гени». «Чăваш поэчĕсем» антологии венгрла, итальянла, акăлчанла, французла тата шведла пичегленсе тухнă.

1988-мĕш çултан Айхие ют çĕршывсене кайма ирĕк параççĕ. Малашне вăл фестивалĕсемпе симпозиумсене хутшăнать. Пĕтĕм тĕнче хапăллать чăваш сăвăçне. Чăваш хăнана» пуш алăпа каймасть. Сăвăç парни – сăвă. Кирек ăçта кайсан та, Айхи çав çĕршыв поэчĕсен «чуна тивекен» сăввисене чăвашла куçар-


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

са кайнă. Çапла вăл акăлчан, грек, итальян, нимĕç, словак, чех, швед, яппун чĕлхисенчен – пурĕ аллăна яхан чĕлхерен чăвашла куçарнă.

2003 çулта В. Маяковский «Облако в штанах» поэми чăвашла кун çути курнă. Мĕн чухлĕ ĕç... Г. Айхин çакăн пек йĕркесем пур:

«Мĕн тумаллине йăлт турам, –
Теесе çеç уйрăласчĕ» («Пилĕк строфа»)
«Мĕн тумаллине йăлт турăн, тăванăм.
Тайма пуç, сана, Поэтăмăр» (Е. Лисина)

2006 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче Мускавра Чăваш халăх поэчĕ, Чăваш патшалăх премийĕсен лауреачĕ Геннадий Айхи (Геннадий Николаевич Лисин) вилсе кайрĕ. Хай вилес умĕн ыйтнипе ăна тăван ялĕнчи – Чваш Республикинчи Патăрьел районĕнчи Çĕньял масарне илсе килсе пытарчĕç. Çавăнтанпа çыравçа халалласа кашни çул тĕп шкулта «Айхи вулавĕсем» иртеççĕ. (Хай вăхăтĕнче çак шкулта Геннадий Николаевичăн ашшĕ вĕрентекен пулса ĕçленĕ, çамрăк Гена та çак шкултах вĕреннĕ). Конкурс пуçланиччен тĕрлĕ шкултан килнĕ ачасемпе вĕрентекенсем шкулпа, музейпа, кĕнеке куравĕле, Г. Айхи хайлавĕсем тăрăх вĕренекенсем йĕркеленĕ ÿкерчĕксеме паллашаççĕ. Конкурсра хутшăнма камал тăвакансем çулран-çул йышланса пыни савăнтарать. Вăл 3 номинаципе иртет: Г. Айхи сăввисем; «Г. Айхи куçарăвĕсем», «Поэт-юбилярсем». 1-мĕш класран пусласа 11 класс таран хутшăнаççĕ вĕренекенсем. Çĕнтерÿçĕсемпе призерсене Хисеп хучĕсемпе, дипломсемпе чысласçĕ. Хăнасем ачасене хăйсен кĕнекисене парнелеççĕ (хуларан поэтсем килеççĕ).

2019-мĕш çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче ентеш-поэтăмăр çуралнăранпа 85 çул çитнине халалласа вăл çуралса ÿснĕ Çĕньял ялĕнче йĕркеленĕ ăслăлах-практика конференцийĕнче те Геннадий Николаевичăн анлă тата тарăн шухашлă поэзине пысăк хак пачĕç. Чавашсен йăли-йĕркипе сума суса, хăнасене Юхма ен тăван ял чиккинче кăпăшка çăкăрпа, кăпăклă сăрапа, шăнкăр-шăнкăр юхакан чăваш юрри-кĕввипе кĕтсе илчĕç. Ентешĕмерĕн ансатах мар творчествине хисеплекенсем хушшинче тĕрлĕ çĕршывран çитнĕ туссем те пулчĕç. Унăн сăввисем темиçе чĕлхепе янараççĕ-çке! Делегатсен йышĕнче район администрацийен


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

пуслахӗ Рудольф Селиванов, Чӑваш Республикин культура, национальноҫӗн тата архив ӗҫӗсен министрӗ К. Яковлев, Геннадий Айхин тӑван йӑмӑке Ева Лисина писатель, тӗп хуламӑрти паллӑ ӑсчахсемпе поэтсем – филологи наукисен кандидачӗ Атнер Хусанкай, Юрий Орлицкий профессор, филологи наукисен докторӗ Наталья Азарова, филологи наукисен кандидачӗ Кирил Корчагин, Германинчи культурологи докторӗ Сергей Бирюков, Ангелина Шмитт докторант (Германия), АПШри поэт, куҫаруҫӑ Илья Купик, адьюнкт-профессор, Санкт-Петербург, Воронеж, Ижевск хулисенчен ҫитнӗ творчество ушканӗсем, ентешпоэтӑмӑрӑн ҫывӑх юлташӗсемпе тӑванӗсем тата ыттисем хутшанчӗҫ.

Сумлӑ мероприятие килнисем чӑн малтанах ентешӗмӗре чыс тума Ҫӗньял масарӗнче ӗмӗрлӗх канлӗх тупнӑ чаплӑ поэтӑмӑр вилтӑприйӗ умӗнче пуҫ тайрӗҫ, кашни йӗрки ахах пӗрчине аса илтерекен йӗркесемшӗн тав туса, унӑн ырӑ ятне ламран-лама куҫарма сӑмах парса чӗрӗ чечексем хучӗҫ. Поэт калана пек ҫӗр сӑвӑран пӗри ҫеҫ мар, паян унӑн кашни йӗрки вуланать ҫеҫ мар, юрӑ пулса та кӗвелесе шӑранать.

Г. Айхи йӑмӑкӗ Ева Лисина писательница тӗл пулӑва нумай чӗрӗлӗх кӗртрӗ, хӑйсен пурнӑҫӗнчи, ачалӑхри сьпаксене илсе кӑтартрӗ. «Ашше фронтран янӑ ҫырусем те, амӑшӗ сӑпайлӑ та кӑмӑллӑ, ҫынсемпе тараван пулма вӗрентнисем те асрах, куҫ умӗнчех», – терӗ Ева Лисина. Поэтамӑрӑн тантӑшӗсем каланӑ тӑрӑх, пӗчӗк те чӑрсӑр, шухӑ ача ҫапла кӗр-кӗрлемелӗх ят-сум ҫӗнсе илет тесе кам шутланӑ ун чухне Ҫӗньялта!

Геннадий Айхи Ҫеҫпӗлпе Митта, Хусанкай традицине малалла тӑсса, пире тӗнче поэзийӗпе паллаштарса, Чӑваш сӑмахне ытти халӑхсем патне ҫитерсе, хай тӗллӗн, уйрӑммӑн аталанса пырса чӑваш поэзийӗнче ҫӗнӗ сӑмах калакан пултаруҫӑ.

«Айхи сӑввисен сербла-хорватла кӑларӑмӗ. Айхи поэзийӗ» хальхи поэзи сӑмахӗ тӗнче шайӗнче аталаннине кӑтартакан чи витӗмлӗ тӗслӗхсенчен пӗри» тесе пӗтӗмлетнине питӗ аван ҫирӗплетет».

Айхи ӗҫӗ тӑван культурӑмӑр шайне кӑтартакан витӗмлӗ пулӑм пулса тӑчӗ. Унӑн поззири ҫулӗ хӑй евӗр, тӑвалла хӑпартакан ҫул.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Чăваш ачи тĕнче поэчĕ пулнипе эпир чăннипех мухтанатпăр, савăнатпăр Сирĕнпе, тăванăмăр. Пуç таятпăр Сирĕн умăрта. «Эс ху ятна тĕнче умне çĕклерĕн, / Тĕнче умне кăлартан халăхна...».




Ӳкерчĕк 1



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)




Ӳкерчӗк 2


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)



«...МАН ЁМĔР – ВĔÇЛЕНМИ ШĂПАМ!»

Çапла çырнă Чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи. Вăл пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа паян тăхăр кун çитрĕ. Çапах та, хăй каланă пекех, яланах пирĕнпе юлать.

• *Поэтăмăра асăнса хатĕрленĕ ярăм – 4 стр.*

Ӳкерчĕк 3




Ӳкерчĕк 4



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)




Ӳкерчĕк 5

### *Список литературы*


1. Г. Айхи çырнисен пуххи. Куçарусем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2014.

2. Юман А. Геннадий Айхи тĕнчи. Г. Айхи çырăвĕсем / А. Юман.

3. Валерий Алексин. Тăванлăхăн чĕре тĕвви.

4. Хусанкай А. Шалти сăваплă ăнкару / А. Хусанкай // Тăван Атал. – 2004. – №4. – С. 1–3.

5. Айги Г.  Разговор на расстоянии / Г. Айги. – СПб.: Лимбус Пресс.



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)